28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ДЕКАБРЬ 18 ЫТЛАРИКУН 245 (6906) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

КУЛЛЕН КИРЛĔ ТАВАРСЕМПЕ АПАТ-ÇИМĔÇ ЫТЛАРАХ ТУСА КĂЛАРАССИШĔН!

Пирĕн халăх нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă Отечественнăй аслă вăрçăран çĕнтерӳçĕ пулса тухрĕ. Çак çĕнтерĕве тăвас тесе, вăл пĕтĕм вăя, пĕтĕм пултарулăха, мĕнпур майсене мобилизацилесе кĕрешрĕ. Вăрçă кăларса тăратнă пысăк йывăрлăхсене чăтăмлăн та паттăррăн тӳссе ирттерчĕ, вĕсене большевикла çĕнтерсе пычĕ.

Халĕ пирĕн çĕршыв мирлĕ аталану тапхăрĕнче пурăнать. Çĕнĕ тапхăр çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕ. Вăрçă юхăнтарнă халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантарса пырасси, пирĕн çĕршывăн оборона хăватне татах та ытларах тĕреклетесси, ĕççыннисен кулленхи интересĕсене лайăххăрах тивĕçтерсе пырасси, — çакăн пек задачăсем тăраççĕ халĕ партипе совет, профсоюзпа хуçалăх организацийĕсем умĕнче.

Вăрçă вăхăтĕнче вăрçă ыйтнă япаласене туса кăларассишĕн ытларах тăрăшмалла пулнă пулсан, халĕ ĕнтĕ пирĕн промышленноçăн халăх хуçалăхĕпе ĕççыннисем куллен ыйтакан япаласене туса кăларассишĕн ытларах тăрăшмалла. Ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатма тăрăшасси хальхи кунăн тĕп ыйтăвĕсенчен пĕри пулса тăрать.

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар горкомĕн пĕрлешӳллĕ пленумĕ «Куллен кирлĕ таварсемпе апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» ятарласа ыйту лартса сӳтсе яврĕ. Пленум республикăри вырăнти промышленноçăн, промкооперацин тата инвалидсен кооперацийĕн вунă уйăхри ĕçне çителĕксĕр тесе хакларĕ. Чăваш АССР Вырăнти промышленность халăх комиссариачĕн предприятийĕсем кăçалхи вунă уйăхри плана 85 процент, промкооперации артелĕсем—77,9 процент тата коопинсоюз артелĕсем—86,7 процент кăна тултарнă. Çапла вара вĕсем иртнĕ çулти вунă уйăхринчен те чылай начартарах ĕçленĕ. Ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе уйрăмăнах Хĕрлĕ Чутай, Ишлей, Елчĕк, Советски, Тăвай, Шăмăршă районĕсенче тата Улатăр хулинче начар ĕçлеççĕ.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли план ассортиментсем енĕпе те çителĕксĕр пурнăçа кĕрсе пырать. Сăмахран, вырăнти промышленность 23 тĕрлĕ изделирен кăçалхи вунă уйăх хушшинче плана 5 издели енĕпе кăна тултарнă, инвалидсен кооперацийĕ 16 изделирен 6 издели енĕпе кăна тата промысла кооперацийĕ 45 изделирен 5 издели енĕпе кăна плана тултарнă. Сĕтел-пукансем, тĕрлĕ кӳршексем, супăнь, тимĕр япаласем, çунасемпе урапасем, шкулта кирлĕ япаласем, стройматериалсем тата ытти куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли план çав тери çителĕксĕр пурнăçа кĕрсе пырать. Чылай районсенче ĕлĕк пулнă, анчах халĕ юхăнса кайнă промыслсене çĕнĕрен юсаса ĕçе ярас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. Райпромкомбинатсене тĕреклетес тата çĕнĕ производствăсем организацилес тĕлĕшпе те ĕç начар пырать, çав вăхăтрах вырăнти промышленноçпа промкооперацире ахаль выртакан оборудованисем те пур. Пысăк майсем пулнă пулин те, нумай районсенче вырăнти апат-çимĕç продукчĕсемпе производствăра çителĕксĕр усă кураççĕ. Çырласемпе кăмпасем хатĕрлемелли плана, çавăн пекех тата пулă тытмалли тата апат-çимĕç промышленноçĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарман. Урана тăхăнмалли япаласене, тумтирсене тата килçуртра кирлĕ пулакан ытти тĕрлĕ хатĕрсене юсаса парас ĕçе начар организациленĕ. Вĕсене юсакан мастерскойсем çителĕксĕр, вĕсен ĕç вăйĕ те, чĕртаварпа инструментсем те сахал. Вырăнти промышленность халăх комиссариачĕ, промкооперации управленийĕпе Чăвашкоопинсоюз хăйсен предприятийĕсене, артелĕсене тата тĕрлĕ мастерскойĕсене техника енĕпе кирлĕ пек ертсе пымаççĕ. Туса кăларакан япаласен пахалăхне лайăхлатассишĕн тата вĕсен хакне йӳнетессишĕн уйрăмах начар кĕрешеççĕ.

Ĕççынни депутачĕсен хуласемпе районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем, ВКП(б) горкомĕсем тата райкомĕсем те вырăнти промышленность предприятийĕсемпе кооперации артелĕсем тата мастерскойсем çине çителĕклĕ çаврăнса пăхаççĕ теме çук-ха. Çав предприятисемпе артельсенче рабочисем çитмеççĕ пулин те, райисполкомсемпе парти райкомĕсем рабочисен кадрĕсене пухса çитерес тата вĕсене пурăнма тивĕçлĕ условисем туса парас тĕлĕшпе сахал тăрăшаççĕ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Шупашкар горкомĕн пĕрлешӳллĕ пленумĕ çапла кăтартса хăварчĕ: вырăнти чĕртавартан тата отходсенчен куллен кирлĕ таварсем тата апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларассине пур предприятисемпе артельсенче те хăвăрт ӳстерсе пырасси республикăри партипе совет организацийĕсен чи пысăк задачи пулса тăрать, терĕ. Пленум куллен кирлĕ таварсемпе апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларас тĕлĕшпе государство панă плана кашни хулапа кашни район хисеп енĕпе кăна мар, пахалăх енĕпе те пĕтĕмĕшпех тултармалла тăвас тесе, пур мерăсене те йышăнма хушса хăварчĕ. Вырăнти промышленноçпа кооперации промышленноçĕ юлса пынине, вĕсем плана тултарас тĕлĕшпе государство дисциплинине пăснине малашне тӳсме çук. Çавăнпа та çак промышленноçсене ертсе пыракан работниксен, ВКП(б) райкомĕсен тата хуларипе районсенчи Советсен исполкомĕсен промкомбинатсемпе артельсем мĕншĕн начар ĕçленине халех тĕпчесе пăлăртса, ĕçре чăрмантаракан çитменлĕхсене сирмелле.

Вырăнти промышленноçпа кооперации промышленность работникĕсен плана ассортимент тата пахалăх енĕпе тултарасси çине бюрократла пăхас йăлана халех пĕтермелле. Пирĕн ĕççыннисене çителĕклĕ таран тавар туса памалла кăна мар, тата лайăх тавар памалла, вĕсене мĕн кирлине пурне те, йӳнĕ хакпа туса кăлармалла тăрăшмалла. Çавăнпа та планпа пăхман тата начар таварсем туса кăларас государствăна хирĕçле практикăна çывăх вăхăтрах пĕтерес пулать. Предприятисемпе артельсенче продукци пахалăхне тăтăшах тĕрĕслесе тăрас, вĕсене марка çапса кăларас, çирĕплетнĕ стандартсемпе техника условийĕсене пăхăнса пырас ĕçе халех йĕркелесе ямалла.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине ӳстерес тесен, пирĕн хамăр алăри мĕнпур майсемпе усă курмалла. Çакна май, ĕççĕр выртакан оборудованисемпе тата инструментсемпе пуринпе те усă курмалла тăвас пулать, юлашки çулсенче чарса лартнă предприятисене пурне те ĕçе кĕртес пулать. Пирĕн республикăра купăссем, фанера, чăмадансем, тĕрленĕ кĕпесем, çатанран тунă пукансем тата çатан урапасем туса кăларма майсем пур.

Пирĕн промкомбинатсемпе кооперации артелĕсем чылайĕшĕ вăйсăртарах, çавăнпа та вĕсене аслăлатса тĕреклетес тата çĕнĕ производствăсем организацилес тĕлĕшпе те çине тăрса ĕçлени кирлĕ. Ĕççыннисен урана тăхăнмалли япалисене, тумтирĕсене тата килçуртри ытти хатĕрсене юсаса паракан предприятисемпе мастерскойсен хисепне малалла ӳстерсе пымалла, вĕсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла.

Кунсăр пуçне, вырăнти промышленность предприятийĕсемпе кооперации артелĕсен ĕçне лайăхлатас тесен, предприятисенчи рабочисемпе артель членĕсен квалификацине ӳстерни, вĕсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатса пыни кирлĕ. Наркоматсемпе управленисен руководителĕсем, районсенчи ертсе пыракан работниксем вырăнти промышленноçри рабочисемпе артель членĕсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн, вĕсене вăхăтра ĕçукçи тӳлессишĕн, столовăйсем организацилессишĕн, карточкăсем тăрăх пама тивĕçлĕ апат-çимĕçе пĕтĕмпех парса тăрассишĕн куллен тăрăшма тивĕçлĕ. Кунпа пĕрлех массăллă профессиллĕ кадрсене пĕччентерĕн вĕрентсе е тĕрлĕ курссем организацилесе, стахановла шкулсенче вĕрентсе çĕнĕрен хатĕрлесе пымалла. Ĕç тăрăх тӳлес йĕркене çирĕплетсе пымалла.

Вырăнти промышленность предприятийĕсемпе кооперации артелĕсенче чĕртаварсемпе материалсене тата топливăна шута илсе тăрас ĕçе начар йĕркеленĕ, вĕсене перекетлĕн тыткалассишĕн кĕрешни çук. Çак çитменлĕхе пĕтерес пулать. Чĕртавара тата топливăна перекетлес тесе, кашни предприятипе артельсенче тивĕçлĕ кĕрешӳ пуçарса ямалла.

ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен тата вырăнти промышленность предприятийĕсемпе артельсенчи партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен рабочисемпе служащисем тата артель членĕсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе татăклăнах лайăхлатмалла. Куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана тултарни тата вĕсен пахалăхне лайăхлатни халĕ хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчи питех те пысăк задача пулса тăнине вĕсене тĕплĕн ăнлантарса памалла. СССР Верховнăй Советне суйлама хатĕрленнĕ май, рабочисемпе артель членĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва тата стахановла юхăма вăйлатса пырса, предприятисемпе артельсен коллективĕсене производство планне ăнăçлăн тултарма мобилизацилемелле.

Ют çĕршыв ĕçĕсен виçĕ министрĕн канашлăвĕ

Декабрĕн 16-мĕшĕнче Мускавра Великобританин, Совет Союзĕн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕ пуçланнă.

Канашлăва хутшăнса ĕçлекен Совет Союзĕн делегацине СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов ертсе пырать. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен делегацине Государство Секретарĕ Бирнс господин ертсе пырать. Великобритани делегацине Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Бевин господин ертсе пырать. (ТАСС)

СССР Верховный Советне суйлама Шупашкар хулинче тунă суйлав участокĕсенчи суйлав комиссисен составне çирĕплетесси çинчен

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совет исполкомĕ йышăннă решени

Юлашки. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 244-мĕш номерĕнче.

13-МĔШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Ида Иосифовна **Добрынина**—пĕр заводри парти организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Мария Семеновна **Мурашкина**—Чăвашсен государство пединститутĕнчи преподавательсенчен.

Участокри суйлав комиссийĕн секретарĕ Мария Алексеевна **Абрамовская**—пĕр заводри плановăй отделăн инженерĕсемпе техникĕсенчен тата служащийĕсенчен.

Участокри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Григорий Ефимович **Ефимов**—Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи лесоохранăпа лесонасаждени управленийĕнчи парти организацийĕнчен.

Елена Ефремовна **Якимова** — Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнчи комсомол организацийĕнчен.

Ева Ефимовна **Либо**—Чăваш АССР НКВД санчаçĕнчи медработниксен коллективĕнчен.

Мария Дмитриевна **Ильина** — «Социализм» колхозăн колхозникĕсемпе колхозницисенчен.

Вера Николаевна **Афанасьева**—пĕр заводри изоляци цехĕнче ĕçлекен рабочисемпе служащисенчен.

Павел Викторович **Попов**—Электромеханика техникумĕнчи студентсемпе преподавательсен коллективĕнчен.

14-МĔШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Верниея Ивановна **Жаркова**—Чăваш АССР НКВД санчаçĕнче ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Степан Григорьевич **Григорьев**—Чăвашсен государство пединститутĕнчи профессорсемпе преподавательсенчен.

Участокри суйлав комиссийĕн секретарĕ Серафима Софроновна **Шарун**—Чăваш АССР Сывлăх Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Мария Ивановна **Минаева** — 1-мĕш номерлĕ ача яслинче ĕçлекенсенчен.

Ольга Константиновна **Добровольская**—пĕр завод цехĕнчи рабочисемпе служащисенчен тата инженерсемпе техниксенчен.

Яков Иванович **Зинченко**—пĕр заводри профсоюз организацийĕнчен.

Александра Алексеевна **Жаринова** — Спецбанкри комсомол организацийĕнчен.

Екатерина Андреевна **Шаронова**—арçын ачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчи комсомол организацийĕнчен.

Михаил Евдокимович **Ерышев**—Приволжски вăрманпромхозĕнчи инженерсемпе техниксен коллективĕнчен.

15-МĔШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Георгий Федотович **Крупский** — тарасасем юсакан заводри рабочисемпе служащисенчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ София Ивановна **Ошерова**—аш-какай комбинатĕнчи рабочисемпе служащисенчен.

Участокри суйлав комиссийĕн секретарĕ Сергей Николаевич **Дмитриев** — Горвоенкоматри офицерсемпе личнăй составран.

Участокри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Тамара Николаевна **Селезнева**—Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнчи зоотехника факультечĕн II-мĕш курсĕнче вĕренекен студентсен коллективĕнчен.

Вера Егоровна **Вдовина**—Хулари апат-çимĕç комбинатĕнче ĕçлекен рабочисемпе служащисенчен.

Лидия Ивановна **Симонова**—Росглаввино совхозĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Станислав Александрович **Субботин** — Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи лесоохранăпа лесонасаждени управленийĕн коллективĕнчен.

Наталия Александровна **Никитина** — кондитер фабрикинчи рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Зинаида Андреевна **Белова** — Чăваш АССР Наркомпищепром коллективĕнчен.

16-МĔШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Юлия Яковлевна **Нефедова** — ачасем çуратмалли çуртра ĕçлекен медработниксен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Елена Ермолаевна **Ухватова**—хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчи учительсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комиссийĕн секретарĕ Фаина Николаевна **Игнатьева** — хĕрачасен 3-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчи учительсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Анна Антоновна **Родионова**—ача çуратмалли çуртра ĕçлекен медработниксен коллективĕнчен.

Филипп Иванович **Милютин**—пĕр заводри главнăй механик цехĕнче ĕçлекен рабочисенчен.

Евдокия Андреевна **Хвастунова**—Госбанкри комсомол организацийĕнчен.

Александра Дмитриевна **Лебедь**—Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнчи зоотехника факультечĕн 1-мĕш курсĕнче вĕренекен студентсен коллективĕнчен.

17-МĔШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Константин Александрович **Капранов**—пĕр заводри сборочнăй цехра ĕçлекен рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Константин Павлович **Кузин**—пĕр заводри парти организацийĕнчен.

Участокри суйлав комиссийĕн секретарĕ Василий Антонович **Плотников**—пĕр завод управленийĕнче ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Зоя Львовна **Антонова**—Чапаев рабочи поселокĕнчи килхуçи хĕрарăмĕсен активĕнчен.

Николай Михайлович **Дрезин**—пĕр заводри снабженипе сбыт отделĕнче ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Серафима Ивановна **Веселова**—пĕр заводри комсомол организацийĕнчен.

Сабира Назировна **Хаирова** — пĕр заводри санитари чаçĕнче ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Мариамм Мироновна **Мироньян** — пĕр заводри техникăллă контроль отделĕнче ĕçлекен инженерсемпе техниксен коллективĕнчен.

Михаил Васильевич **Михайлов** — пĕр заводри парти организацийĕнчен.

18-МĔШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Алексей Алексеевич **Плешанов**—пĕр заводри парти организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Георгий Иванович **Архипов**—заводри центральнăй лабораторире ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комиссийĕн секретарĕ Елизавета Георгиевна **Андреева**—Чапаев поселокĕнчи вăтам шкулта ĕçлекен учительсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Екатерина Даниловна **Гречанникова**—пĕр заводри парти организацийĕнчен.

Михаил Захарович **Захаров** — пĕр заводри кадрсен отделĕнче ĕçлекенсенчен.

Петр Павлович **Горбунчиков**—пĕр заводри комсомол организацийĕнчен.

Михаил Николаевич **Сорокин**—пĕр заводри техникăллă контроль отделĕнче ĕçлекенсенчен.

Валентина Захаровна **Захарова**—пĕр заводри комсомол организацийĕнчен.

Александр Семенович **Туликов** — пĕр заводри профсоюз организацийĕнчен.

19-МĔШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Геннадий Ильич **Багров** — милютин заводĕнчи парти организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ—Алексей Климентьевич **Климентьев**—Милютин завочĕн управленийĕнче ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комиссийĕн секретарĕ Серафима Ефремовна **Иванова** — Милютин заводĕнчи парти организацийĕнчен.

Участокри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Мария Сергеевна **Горластинова**—Милютин заводĕнчи комсомол организацийĕнчен.

Николай Константинович **Журавлев** — Милютин заводĕнчи механически цехра ĕçлекен рабочисенчен.

Прасковья Никифоровна **Никифорова**—Милютин заводĕнчи ача-пăча садĕнче ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Прасковья Павловна **Коноплева**—Милютин заводĕнчи медицина пунктĕнче ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Клавдия Семеновна **Сидорова**—Милютин заводĕнчи хăма çуракан цехра ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Василий Степанович **Степанов**—Милютин заводĕнчи транспорт цехĕнче ĕçлекенсенчен.

20-МĔШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Семен Алексеевич **Каменев** — Атăл леш енчи электростанцинчи парти организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Антонина Дмитриевна **Токмакова**—çичĕ çул вĕренмелли шкулта ĕçлекен учительсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комиссийĕн секретарĕ Капитолина Ильинична **Баймуратова**—Атăл леш енчи электростанцинчи парти организацийĕнчен.

Участокри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Александра Ивановна **Листова**—Сосновкăри çичĕ çул вĕренмелли шкулта ĕçлекен учительсен коллективĕнчен.

Геннадий Петрович **Петров**—Атăл леш енчи электростанцинчи комсомол организацийĕнчен.

Петр Владимирович **Михайлов**—«14 лет Октября» колхозри колхозниксенчен.

Иван Иванович **Юнах**—Атăл леш енчи электростанцинчи рабочисемпе служащисенчен.

Алевтина Степановна **Печищева**—Атăл леш енчи электростанцинче ĕçлекен рабочисемпе служащисенчен.

Зоя Павловна **Гаврюшина**—Атăл леш енчи электростанцинче ĕçлекен рабочисемпе служащисенчен.

21-МĔШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Петр Иванович **Иванов**—вăрман промартель членĕсенчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Павел Федорович **Касеев**—йывăç юхтарас тĕлĕшпе ĕçлекенсен Союзĕн районри комитетĕнчен.

Участокри суйлав комиссийĕн секретарĕ Мария Александровна **Офтаева**—Милютин завочĕн Лебедински вăрман участокĕнче ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Яков Иванович **Иванов**—Милютин завочĕн Лебедински вăрман участокĕнче ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Агриппина Ивановна **Присмотрова** — ача яслинче ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Иван Еремеевич **Винков** — Милютин завочĕн управленийĕнче ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Нурулла Гарифович **Гарифов**—Милютин заводĕнчи комсомол организацийĕнчен.

Алексей Евлампьевич **Яковлев**—Милютин заводĕнчи комсомол организацийĕнчен.

Сергей Ильич **Козяев** — Шупашкарти химлесхоз коллективĕнчен.

22-МĔШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Григорий Васильевич **Шефер** — торф предприятийĕнчи профсоюз организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Яков Герасимович **Нагаев** — торф предприятийĕнчи парти организацийĕнчен.

Участокри суйлав комиссийĕн секретарĕ Николай Николаевич **Хабаров** — торф предприятийĕн конторинче ĕçлекенсенчен.

Участокри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Ираида Григорьевна **Кашина**—торф предприятийĕнчи комсомол организацийĕнчен.

Спиридон Васильевич **Пантюхин**—торф предприятийĕнчи транспорт отделĕнче ĕçлекен рабочисенчен.

Анастасия Андреевна **Куприянова** — Шупашкар вăрман хуçалăхĕнчи рабочисемпе служащисенчен.

Агафья Павловна **Потьянова** — торф предприятийĕнчи механически цехра ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Антонина Макаровна **Андреева**—ачасен санаторийĕнче ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Ибраим Газизович **Газизов**—торф предприятийĕнчи производство отделĕнче ĕçлекенсенчен.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар Хула Совет Исполкомĕн Председателĕ П. АНИКИН.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар Хула Совет Исполкомĕн Секретарĕ Л. МЫШКИНА.

1945 çулхи декабрĕн 14-мĕшĕ.

РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ÇУЛТАЛĂКРИ ПЛАНА ДЕКАБРĔН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

Районсем	Плана мĕçе процент тултарнă
1. Чурачăк	111,7
2. Красноармейски	111,5
3. Етĕрне	110,9
4. Вăрнар	110,0
5. Советски	109,1
6. Муркаш	109,0
7. Сĕнтĕр	108,6
8. Шупашкар	108,1
9. Элĕк	107,5
10. Калинино	106,6
11. Ишлей	105,7
12. Шăхасан	105,6
13. Октябрьски	105,1
14. Сĕнтĕрвăрри	104,2
15. Çĕрпӳ	103,7
16. Пăрачкав	100,7
17. Елчĕк	99,2
18. Вăрмар	98,0
19. Канаш	92,5
20. Хĕрлĕ Чутай	92,5
21. Куславкка	92,1
22. Йĕпреç	90,4
23. Комсомольски	86,7
24. Сĕмĕрле	85,6
25. Первомайски	84,8
26. Улатăр	82,4
27. Тăвай	78,4
28. Чкаловски	77,6
29. Шăмăршă	60,8
30. Кувакино	54,6

ГĔР КОЛХОЗ ТА ГОСУДАРСТВО УМĔНЧЕ ПАРĂМЛĂ ПУЛМАЛЛА МАР

ЕЛЧĔК, декабрĕн 17-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Государствăна тырă парса татман колхозсен шучĕ кашни кунах сахалланса пырать. Район тырă памалли плана 99 процент ытла пурнăçланă. Анчах та юлашки 5 кун хушшинчи ӳсĕм çур процентран та каярах шутланать. Уйрăм колхозсем государство умĕнчи хăйсен парăмне парса тама васкаманни кăна плана 100 проценчĕпех тултарма района чăрмантарса тăрать. Кӳлпуçĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозăн памалли пурĕ те 26 центнер кăна юлнă. Çак колхоз вара декабрь уйăхĕнче 2 центнер кăна леçнĕ. Колхоз председателĕ Давдов юлташ, государствăна памалли нумай юлмарĕ тесе, юлашки 24 центнер тырра леçме васкамасть. Патрекелĕнчи «Осоавиахим» колхоз государствăна тырă памалли плана 92 процент тултарнă, 19 центнер кăна памалла. Колхоз председателĕ Иванов юлташ çак тырра тахçанах леçсе пама пултарнă тата пултарать те, кунта вăл васкаманни кăна ĕçе чăрмантарса тăнă.

«Комбайн», «Смычка», Дзержинский тата Молотов ячĕсемпе тăракан колхозсем те государствăна пама тырă пур çинчех ĕçе тăсса пыраççĕ.

«Заря», «Новая жизнь» колхозсене тырă вырăнне аш-какай пама ирĕк панă. Çакна май ку колхозсем юлашки вунă кун хушшинче ӳсĕм турĕç те лăпланса ларчĕç. Государство умĕнчи парăма пĕтĕмпех парса татас тесе нимĕн те тумаççĕ.

Районра уйрăмах «Коммунист», «Малалла», «Авангард», Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем юлса пыраççĕ. Çак колхозсем хăйсен обязательствисене 50 процента яхăн кăна тултарнă. Анчах та асăннă колхозсен председателĕсем Крылов, Илларионов, Шемекеев тата Иванов юлташсем парăма татас тесе кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха.

Паянхи кун тĕлне районра 9 колхоз государствăна тырă парса татман. 5 колхоз Хĕрлĕ Çар фондне пама пулнă обязательствăна пурнăçламан. Анчах та кунта плана тултарма çывăххине курса лăпланнине сăнама пулать.

Т. ИВАНОВ.

6 трактор юсанă

КАЛИНИНО. **(Хамăр корр.).** Кунти машинно-тракторнăй станци кăçалхи кĕркуннепе хĕллехи сезонра тракторсем юсас ĕçе ăнăçлă тытăнчĕ. Паянхи куна 6 трактор юсаса пĕтернĕ, 5 трактор юсама лартнă. Вĕсене те çак кунсенчех юсаса пĕтереççĕ. Çавăн хыççăн вара 4-мĕш кварталта тракторсем юсамалли плана пĕтĕмпех пурнăçланать.

Тракторсем юсас ĕçе МТС-ăн старши механикĕ орденоносец Ремизов юлташ лайăх ертсе пырать.

Е. ВОЛКОВ.

Çил арманĕсене япăхтарнă

ВĂРМАР. Хируйĕнчи «Пионер» колхозăн 3 çил арманĕ. Анчах та халĕ вĕсенчен пĕри кăна ĕçлекелет. Вăл та пулин час-часах чарăнса ларать. Ытти икĕ арманĕн çуначĕсем хуçăлса аннă, арман умĕнчи сарайăн тăрри сĕвĕнсе ӳкнĕ. Хăйсен арманĕсем ĕçлемен пирки колхозниксем ытти ялсенчи армансене каяççĕ. Колхоз председателĕ Иван Савельев армансене юсас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

А. ИВАНОВ.

Смоленск хулипе облаçĕнче фашистла нимĕç захватчикĕсем тунă тискер ĕçсемшĕн суд туни

Декабрĕн 15-мĕшĕнче Смоленск хулинче округри Çар Трибуналĕ Германи çарĕнче тăнă нимĕçсен пĕр ушкăнне суд тума тытăннă. Вĕсене Смоленск хулипе Смоленск облаçне 1941—1943 çулсенче вăхăтлăха оккупацилесе тăнă чухне гражданла халăха тата тыткăна лекнĕ красноармеецсене йышлăн вĕлернĕшĕн тата тем тĕрлĕ асаплантарнăшăн айăпласçĕ.

Вунă çынна суд тăвассĕ, вĕсем çаксем: Германи çарĕн хурал батальонĕсенче тăнă Вайс Вилли, Гаудиян Курт, Генчке Фриц, Мюллер Эрих, Краузе Вилли, Винклер Гейнц, Эвертс Эрих, нимĕçсен çар лазаретĕнчи лекарь помощникĕ Модиш Рудольф, нимĕçсен Смоленскри çар комендатурин тăлмачĕ Киршфельд Роберт тата Германи çарĕн 350-мĕш пехотнăй полкĕнче тăнă Райшман Иозеф.

Ĕçе тĕпчесе тухнă хыççăн вĕсем пурте çак ĕçсемшĕн айăпли палăрнă: вĕсем мирлĕ совет гражданĕсене асаплантарас тата пĕтерес ĕçе яланах хутшăнса пынă, çапла вĕсем мирлĕ совет гражданĕсене пере-пере пăрахнă, çака-çака вĕлернĕ тата «душегубкăсенче» вĕлернĕ, вĕсем хĕрарăмсене, ачасене тата ватă çынсене пусмăрланă, вĕсенчен тем тĕрлĕ мăшкăлланă, вĕсене саратнă, тем тĕрлĕ хĕнесе асаплантарнă, тыткăна лекнĕ çар çыннисене тискеррĕн тыткаланă, вĕсене пĕтерсе пынă.

Следствире айăпланакансем пурте хăйсем тунă преступленисемшĕн айăплине йышăннă, унсăр пусне, вĕсем тунă преступленисене темĕн чухлĕ свидетель çирĕплетсе панă тата вĕсен преступленийĕсене нимĕçсен фашистла захватчикĕсен тата вĕсемпе пĕр каварлисен тискер ĕçĕсене тĕпчесе палăртма тунă Государственнăй Чрезвычайнăй Комисси пухнă материалсем те çирĕплетсе параççĕ.

Çав ĕçе Çар Трибуналĕ уçă ларусенче пăхать. Суда юстици генерал-майорĕ Горячев юлташ председатель пулса ертсе пырать. Государство енчен айăплакан—юстицин старши советникĕ Смирнов юлташ.

Айăпланакансене суд хушнипе çак адвокатсем хÿтĕлессĕ: Казначеев, Булов, Луговской тата Сидоренко юлташсем.

Декабрĕн 15-мĕшĕнчи ирхи ларура айăпласа çырнине вуласа панă. Айăпласа çырнинче çапла каланă: Совет Союзне ултавлăн тапăннă хыççăн, Смоленск хулипе облаçне оккупациленĕ хыççăн фашистла нимĕç çарĕсем совет гражданĕсене илан тăрăх вĕлерсе пыма пуçланă: мирлĕ пурăнакан çынсене, çав шутра хĕрарăмсемпе стариксене тата ачасене, пере-пере, çака-çака тата газпа пăчăхтара-пăчăхтара вĕлернĕ, тыткăна лекнĕ совет çыннисене тискеррĕн пĕтерсе пынă, хуласемпе ялсене çунтарнă тата ишĕлтернĕ, промышленность предприятийĕсемпе колхозсене тата культура учрежденийĕсене çаратнă тата аркатнă, совет çыннисене нимĕç чуралăхне хăвала-хăвала кайнă.

Çакна тĕпчесе пĕлнĕ: Смоленск хулипе облаçĕнче çав тискер ĕçсене нимĕç çарĕн офицерĕсемпе салтакĕсем туса пынă, вĕсем çав ĕçсене тыла сыхлакан çарсен «центр» ятлă ушкăнĕн командующийĕ фон Шенкендорф генерал хушнипе туса тăнă (Шенкендорфа тупайман-ха), çак генерал хăй Германи çарĕн верховнăй командованийĕн пĕтĕмĕшле планĕсемпе кăтартăвĕсем тăрăх ĕçлесе тăнă.

Н. Бурденко академик ертсе пыракан хăйне уйрăм комисси, Смоленск хулине çайса, унта вилĕ тăприсене чавса пăхнă тата çынсем нумай пытарнă территорисен участокĕсене пăхса тухнă. Вăл çакна палăртнă: Смоленск хулипе облаçне вăхăтлăха оккупацилесе тăнă вăхăтра фашистла нимĕç ирсĕрĕсем 135.000 совет гражданне ытла вĕлернĕ.

Следстви çакна палăртнă: мирлĕ совет халăхне тата тыткăна лекнĕ çынсене илан тăрăх вĕлерсе пырас ĕçе Германи çарĕн Смоленск хулинче тăнă тĕрлĕ çар чаçĕсем, çав шутра 335-мĕшпе 490-мĕш хурал батальонĕсем тата халь айăпланакан çак çынсем хутшăннă:

Киршфельд Роберт, Модиш Рудольф, Вайс Вилли, Гаудиян Курт, Генчке Фриц, Мюллер Эрих, Краузе Вилли, Винклер Гейнц, Эбертс Эрих тата Райшман Иозеф хутшăннă.

Следстви çакна палăртнă: нимĕçсем Смоленск хулипе облаçĕнчи мирлĕ совет гражданĕсене вĕлерсе пынă йĕрке Совет Союзĕн оккупациленĕ ытти территорийĕсенчи пекех пулнă.

Айăпланакансем каласа панă тăрăх, совет çыннисене Гитлер правительстви тата Германи çарĕн командованийĕ хушнă тăрăх вĕлерсе пынă.

Нимĕçсен çар çыннисем мирлĕ пурнăçпа пурăнакан çынсене, арçынне-хĕрарăмне тата мисе çултине пăхмасăр, Смоленск хулин урамĕсенчех пĕр сăлтавсăрах тытнă та комендатурăна е нимĕçсен ытти карательнăй органĕсене илсе кайнă. Унта вĕсене ыйтса тĕпченĕ вăхăтра çав тери хытă мăшкăлланă тата асаплантарнă, унтан вара персе вĕлернĕ.

Смоленск хулинче совет çыннисене йышлăн пере-пере вĕлернисĕр пусне, нимĕçсем тата мирлĕ совет гражданĕсене вĕлермешкĕн «душегубка» ятлă ятарласа тунă автомашинăпа анлăн усă курнă.

1942 çулхи июнь уйăхĕнче нимĕç фашисчĕсем хулан Верхние Садки ятлă районĕнчи пĕтĕм халăха, çав шутра ачасене те, стариксемпе хĕрарăмсене те, вĕлерсе пĕтернĕ, вĕсен пурлăхне çаратса тухнă.

Мирлĕ пурăнакан совет гражданĕсене вĕлерсе пынипе пĕрлех фашистла нимĕç çарĕсем тыткăна лекнĕ совет çыннисене тискеррĕн тыткаланă, вĕсене Смоленск хулинчи тыткăна лекнĕ çынсене урăх çĕре ăсатмалли 126-мĕш номерлĕ лагерьте (çав лагере нимĕçсем «Дулаг-126» есе ят панă), Смоленскри 21-мĕш номерлĕ лагерьте, çавăн пекех тата тыткăнри çынсене 1941 çулхи сентябрь уйăхĕнче Смоленск урлă хуралласа касарнă чухне тата вĕсене чугун çулсемпе турттарнă чухне тискеррĕн тыткаласа вĕлернĕ.

Тытса хупнă çынсемпе свидетельсем каланă тăрăх, Германин тыткăна лекнĕ çынсем валли тунă лагерĕсене мирлĕ çынсене те, çав шутра стариксемпе хĕрарăмсене те, ачасене те хупнă.

Халь айăпланакан нимĕçсем Вайс Вилли, Мюллер Вилли, Гаудиян Курт тата ыттисем те хăйсенчен ыйтса тĕпченĕ чухне çапла каласа панă: Германи çарĕсен тыла сыхламалли «центр» ятлă группировкин батальонĕсене, мирлĕ гражданла халăха хирĕç карательнăй ĕçсем тунипе пĕрлех, лагерьсене хураллама тата тыткăнри çынсене çул çинче хуралласа пыма хушнă пулнă. Айăпланакансем çав батальонсенче ĕçлесе тăнă.

Халь тытса хупнă çынсем хăйсен начальникĕсем хушнă тăрăх тата хăйсен ирĕкĕпе те, тыткăна лекнĕ совет çыннисене тата çав лагерьсене хупнă мирлĕ çынсене пере-пере тата çака-çака вĕлернĕ. Хăйсен ирĕкĕпе çапла тунине Германи командованийĕ ырланă.

Тыткăна лекнĕ совет çыннисен пысăк ушкăнне 1941 çулхи октябрь уйăхĕ пĕтеспе Вязьма хулинчен Смоленск хулине хуралласа илсе пынă чухне Германи çарĕн 335-мĕш, 490-мĕш хурал батальонĕсен çыннисем çав тыткăнри çынсене тискеррĕн тыткаланă, вĕсем çул çинче тата Смоленск хулинче 10.000 çын таран вĕлернĕ.

Следстви тата çакна палăртнă: Германин 1941 çулхи сентябрьтен пуçласа 1943 çулхи апрельччен Смоленск хулинче тăнă 551-мĕш лазаретĕнче тыткăна лекнĕ вырăссене тискеррĕн тыткаланă.

Йĕрлесе тухса тата çакна палăртнă: фашистла нимĕç çарĕсем Смоленск хулипе облаçĕнче тăнă вăхăтра совет арçыннĕсемпе хĕрарăмĕсене, çав шутра çамрăксене те, темиçе пин çынна Германие каторгăллă ĕçе хăваласа кайнă.

Мирлĕ совет гражданĕсене Германие хăваласа кайнă вăхăтра нимĕç чуралăхне кайма килĕшмен çынсене йышлăн пере-пере вĕлернĕ.

Смоленск хулипе облаçне вăхăтлăха оккупацилесе тăнă вăхăтра фашистла нимĕç çарĕсем хуласемпе ялсене тискеррĕн ишĕлтернĕ, государство учрежденийĕсемпе мирлĕ çынсен пурлăхне çаратнă.

Çакна палăртнă: нимĕçсем Смоленск хулинче 96 промышленность предприятине тата 7.300 çурта ишĕлтернĕ, Смоленск облаçĕнчи районсенче пурăнмалли 125.000 çурта ытла ишĕлтернĕ.

Çапла, акă, Сафоново районĕнче 9.119 çуртран 8.314 çурта, Кордымово районĕнче 5.655 çуртран 5.123 çурта, Ярцево районĕнче 6.000 çуртран 5.065 çурта ишĕлтернĕ.

Çакăнпа пĕрлех нимĕçсем Смоленскри электростанцие, 326 магазинпа базăна, телеграфпа телефон станцине, Смоленск хулинчи чугун çул узелне, чугун çул депоне, 18 больницăпа амбулаторие, 3 кинотеатра, 21 шкула, 6 института, 3 музее тата ыттисене те пĕтерсе тăкнă. Çав учрежденисен оборудованийĕпе пурлăхне пĕтĕмпех çаратса кайнă.

Нимĕçсем Смоленск хулипе облаçĕнче çавăн пек ишĕлтернине тата çаратнине Государствăн Чрезвычайнăй Комиссийĕн акчĕсем çирĕплетсе параççĕ.

Следстви çакна çителĕклĕ палăртнă тесе шутлать: Смоленск хулипе облаçне оккупацилесе тăнă вăхăтра фашистла нимĕç захватчикĕсем çынсене йышлăн вĕлернĕшĕн, усал ĕçсем тунăшăн, мирлĕ çынсене «душегубка» ятлă ятарласа тунă автомашинăсенче углерод окисĕпе пăчăхтарса тата ытти майсемпе те вĕлернĕшĕн, тыткăна лекнĕ совет çыннисене асаплантарнăшăн тата пере-пере вĕлернĕшĕн пĕтĕмпех Германин вăрă-хурахла фашистла правительстви, Германи çарĕн верховнăй командованийĕ тата нимĕçсен çар чаçĕсен, полицейскийĕсен тата карательнăй органĕсен командирĕсемпе начальникĕсем айăплă.

Айăпласа çырнинче малалла Германи çарĕнче тăнă нимĕçсен Модиш Рудольфăн, Киршфельд Робертăн, Вайс Виллин, Гаудиян Куртăн, Генчке Фрицăн, Эвертс Эрихăн, Мюллер Эрихăн, Краузе Виллин, Винклер Гейнцăн тата Райшман Иозефăн тĕпчесе палăртнă конкретнăй преступленийĕсене кăтартса панă.

ДЕКАБРĔН 15-мĕшĕнчи КАÇХИ ЛАРУ

Каçхи ларура айăпланакансенчен ыйтса тĕпчеме пуçланă. Чи малтан Модиш Рудольфран ыйтса тĕпчессĕ. 1941 çулхи сентябрь уйăхĕнчен пуçласа 1943 çулхи апрель уйăхĕччен вăл нимĕçсен Смоленск хулинчи 551-мĕш çар лазаретĕнче лекарь помощникĕ пулса ĕçленĕ. Вăл Хĕрлĕ Çарăн аманнă пирки тыткăна лекнĕ боецĕсене офицерĕсене вĕлерес ĕçе хутшăннă. Вăл хăй тыткăна лекнĕ 23 совет çыннинчен кая мар вĕлернĕ. Модиш тыткăна лекнĕ совет çыннисем çинче преступникла опытсем тунăшăн хăй айăплине, çавăн пекех тата опыт тунă хыççăн совет çыннисене вĕлернĕшĕн айăплине йышăнать. Смоленск хулинчи медицина учрежденийĕсене тата государствăпа уйрăм çынсен çурчĕсене çаратас ĕçе хутшăннăшăн айăплине те йышăнать.

Вăл Германин çар çыннисене сыватмашкăн совет ачисен юнне илнĕшĕн айăплине йышăнать. Вăл медицина опычĕсем тумашкăн суранланнă совет воинĕсен юнне юри пăспăшăн айăплине те йышăнать.

Çавăн пек майпа кулленех 180—200-шер çын вĕлернĕ. Çав лазаретра Модиш ĕçленĕ вăхăтра мĕн пурĕ 3.500—4.000 çар çыннине вĕлернĕ.

Государство айăплаканĕ ыйтсан, айăпланакан Модиш совет офицерĕсенчен-танкисчĕсенчен пĕрне мĕнле вĕлерни çинчен каласа парать. Вăл çапла калать: совет офицерне операцисем тăвакан пÿлĕме илсе пычĕç, унта Германирен практикăна килнĕ гитлерла студентсем опытсем тăватчĕç. «Операци» тунă вăхăтра юн нумай кайнă пирки офицер тăнран кайрĕ. Эпĕ вара халтан кайнă çав лейтенанта морга куçартăм та ăна строфантин нумай ярса вĕлертĕм, тет.

Айăпланакан Модиш малалла çапла калать: суранланнă нимĕç офицерĕсене сыватмашкăн совет ачисенчен 600—800-шер кубла сантиметр юн илеттĕмĕр. Çав ачасем вара е çавăнтах вилетчĕç, е каярахпа йăлтах пачарланса çитнĕ пирки вилетчĕç.

Государство айăплаканĕ çапла ыйтать: совет ачисене юн илмешкĕн 551-мĕш номерлĕ лазарета мĕнле майпа илĕртсе илсе кĕреттĕр?—тет.

Модиш çапла калать: вĕсен ашшĕ-амăшсене хăйсен ачисене сыватмашкăн çапла тума кирлĕ, ĕçе ăнлантараттăмăр,—тет.

Малалла Модиш çăмăл суранланнă красноармеецсен юнне пăсмашкăн мĕнле майсемпе усă курни çинчен каласа парать.

Государство айăплаканĕ—вĕсен юнне мĕншĕн пăснă? тесе ыйтсан, Модиш çапла калать: опытсем тумашкăн, чирлисене сыватмалли çĕнĕ майсене сăнамашкăн, тет. Модиш малалла çапла каласа парать: лазаретра сывă ачасен куç шăрçи тирне касса ăна аманнă нимĕç офицерĕсен куç шăрçи çине çĕлесе хуратчĕç, тет. Вăл пĕрре çакăн пек пулнине аса илет: Мюллер пĕр вырăс хĕрĕн куç шăрçи тирне касса илчĕ те çав хĕр суккăрланса ларчĕ, тет.

Перерыв хыççăн суд айăпланакан Киршфельд Робертран ыйтса тĕпчеме пуçлать.

Германин Смоленск хулинчи çар комендатурин тăлмачĕ Роберт Киршфельд темиçе хут та карательнăй экспедицисенче пулнă, совет гражданĕсене хăй пере-пере вĕлернĕ, совет ялĕсене çунтара-çунтара янă.

— Партизансене тытма сукчĕ, — тет Киршфельд.—Çавăнпа нимĕç командованийĕ, партизансен юхăмне пусарса лартас тесе, пĕр айăпсăр мирлĕ халăха йышлăн персе вĕлерме шут тытрĕ. Судра Киршфельд совет çыннисене Германи чуралăхне хăваласа каяс ĕçе хутшăнни те палăрать.

Унтан суд айăпланакан Эвертс Эрихран ыйтса тĕпчет. Эвертс Эрих вăл карательнăй экспедицисенче пулнă, вăл çав экспедицисем тискер ĕçсем туни çинчен каласа парать.

Государство айăплаканĕ ыйтсан, Эвертс çамрăк ачасен пĕр ушкăнне персе вĕлернине хăй курни çинчен каласа парать. Çав ачасем партизансемпе çыхăнса тăраççĕ пуль, тесе шутланă. Вĕсене ĕнсерен пулеметпа персе вĕлерчĕç, тет.

Малалла суд айăпланакан Вайс Виллирен ыйтса тĕпчет. Вайс Вилли Германи çарĕн 335-мĕш хурал батальонĕнче унтер-офицер пулса ĕçленĕ, вăл çав подразделени тунă преступленисене пурне те хутшăннă.

— Эпĕ ертсе пынипе,—тесе каласа парать вăл,—салтаксем совет çыннисене пере-пере пăрахатчĕç, çакса вĕлеретчĕç тата чĕрĕллех çунтара-çунтара яратчĕç.

Çакăнпа каçхи лару хупăннă. Декабрĕн 16-мĕшĕнчи ирччен суд перерыв тунă.

ДЕКАБРĔН 16-мĕшĕнчи ИРХИ ЛАРУ

СМОЛЕНСК, декабрĕн 16-мĕшĕ (ТАСС). Декабрĕн 16-мĕшĕнчи ирхи ларура чи малтан Краузерен ыйтса тĕпчессĕ. Краузе вăл 335-мĕш хурал батальонĕнче тăнă. Вăл тыткăна лекнĕ совет çыннисене хĕнешĕшĕн, çынсене пере-пере вĕлернĕшĕн, вырăс ялĕсене çаратнăшăн, вырăс арăмĕсемпе хĕрĕсене пусмăрланăшăн тата хĕненĕшĕн хăй айăплине йышăнать. Вăл Смоленск облаçĕнчи Касплă ялне, Осиповичи хули районĕнчи ялсене тата ыттисене те кайнă карательнăй экспедицисенче пулнине йышăнать. Çав экспедицисем мирлĕ совет гражданĕсене йышлăн вĕлернĕ, колхозниксене нимĕç чуралăхне хăваласа кайнă, вĕсен пурлăхне çаратнă, çурчĕсене çунтара-çунтара янă. Краузе хăй темиçе çынна персе вĕлернĕ тата темиçе çурта вут тĕртсе янă.

Государство айăплаканĕ, темиçе ыйту парса, Краузе тунă йышлă тискер ĕçсене палăртать.

Краузе çапла каласа парать: 1941 çулхи октябрьтен пуçласа 1942 çулхи май уйăхĕччен Смоленск хулин Хĕвелтухăçĕнчи вокзалĕнчи пысăках мар лагерьте тыткăнри 1.000 çынна ытла вĕлернĕ. Тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе пĕрле, Германие кайма килĕшмен хĕрарăмсемпе ачасене те вĕлернĕ.

1941 çулта Смоленскра питĕ сивĕ хĕл тăнă, сивĕ 40 градуса та çитнĕ. Тыткăна лекнĕ совет çыннисене кăмакасăр тавар вагонĕсенче пурăнтарнă. Вĕсене кунне пĕр турилкке пăтранчăк шÿрпе панă тата йывăç кĕрпи хутăштарнă çăкăр татăкĕ панă. Начарланса кайнă пирки ура çине тăма пултарайманнисене нимĕçсем пурин куçĕ умĕнчех персе вĕлернĕ.

Краузе малалла Касплă ялĕнче хăй тата унăн ротинчи салтаксем мирлĕ пурăнакан çынсене персе вĕлерни çинчен каласа парать.

Краузе çапла калать: эпĕ приказ парассине кĕтмесĕрех çынсене вĕлерме пуçларăм, тет.

Медицина экспертизин представителĕ çапла ыйтать: тыткăна лекнĕ совет çыннисем мĕнле чирпе чирленине тата вĕсем мĕнле условисенче пурăннине пĕлместĕр-и?—тет.

Краузен ирĕксĕрех çапла калама тивет: вĕри чирпе чирленисене вагонсенчех хăваратчĕç, вĕсене нимĕнле медицина пулăшăвĕ те памасчĕç, çавăн пирки вĕсем сыввисене те чир ертетчĕç, тет.

Суд малалла айăпланакан Курт Гаудиянран ыйтса тĕпчет. Гаудиян хурал батальонĕнче тăнă. Вăл хăйне айăплинипе тĕрĕс тесе йышăнать. Вăл совет çыннисене персе тата çакса вĕлернĕ çĕре хăй хутшăнни çинчен, 60 çынна хăй вĕлерни çинчен, тыткăнри çынсен колоннине Смоленск хулинчен лагере ăсатнă чухне хуралласа пыни çинчен, çав вăхăтра хăй 6 çынна персе вĕлерни çинчен каласа парать. Смоленск облаçĕнчи нумай ялсене вăл мирлĕ пурăнакан халăха çаратнă, совет хĕрĕсене пусмăрланă тата вĕлернĕ.

Айăпланакан Гаудиян тата çакна йышăнать: эпĕ Генчкепе пĕрле тата хурал батальонĕнчи ытти çынсемпе пĕрле мирлĕ çынсене пере-пере вĕлерес, ялсене çаратас, арăмсемпе хĕрсене пусмăрлас ĕçе активлăн хутшăннă, тет.

Айăпланакан Генчке хăй тунă тискер ĕçсене каласа тухать. Вăл тыткăна лекнĕ совет çыннисене Вязьма хулинчен Смоленска илсе пынă чухне, Смоленскран Минска ăсатнă чухне тата 126-мĕш лагерьте вĕлернĕ. Вăл совет ялĕсене çаратса çÿренĕ, мирлĕ пурăнакан граждансене тискеррĕн пусмăрланă, пĕр ялти çынсене чĕрĕллех çунтарса янă. Тыткăна лекнĕ совет çыннисем пурăнакан лагерьте Генчке 8 кун хушшинче 15—18 çынна персе вĕлернĕ.

Государство айăплаканĕ: лагерьте мĕнле йĕрке пулнă вара?

Генчке: лагере хупнă çынсене кунне пăртак пăтранчăк шÿрпе паратчĕç те йывăç кĕрпи хутăштарнă çăкăр татăкĕ паратчĕç.

Малалла çакă паллă пулса тăрать: Смоленск хулинче пурăнакан çынсем, лагере хупнă çынсен пурнăçĕ çав тери начаррине пĕлсен, хăйсемшĕн питĕ хăрушă пулсан та, çав çынсене йĕплĕ пăралук урлă апат-çимĕç нама хăтланнă. Лагерьти çынсем, асапланса пĕтнĕскерсем, выçăскерсем, çав йĕплĕ пралук патне çывхарсан, вĕсене пăшалпа пенĕ.

Генчке хăйне «тÿрре кăларма» хăтланать: лагерьте куллен 50 çынна яхăн вĕлеретчĕç, эпĕ кунне 2—3 çынна çеç вĕлереттĕм, тет.

Государство айăплаканĕ: 126-мĕш номерлĕ лагерьте çеç çапла пулнă-и?

Генчке: пур лагерьсенче те çавăн пекех пулнă.

Государство айăплаканĕ ĕçе тĕплĕрех палăртмашкăн айăпланакансенчен хĕреслĕ ыйтса тĕпчеме пуçлать.

Çапла ыйтса тĕпчесен, çакă паллă пулса тăрать: Вайс хушнă тăрăх, мирлĕ çынсене, çав шутра ачасене те, пулеметпа пере-пере вĕлернĕ иккен.

Вайс: çапла. Эпĕ çавăн пек приказ панă.

Вайспа Краузе каласа пани Генчкене тăрă шыв çине кăларать: Генчке вăл мирлĕ çынсене персе вĕлернĕ çĕре хăй хутшăннине тунма хăтланнă.

Çакăнпа ирхи лару хупăнать.

Ют çĕршывсемпе телефон тăрăх çыхăнса тăрасси

СССР Çыхăну Халăх Комиссариачĕ Румынипе, Болгарипе, Финляндипе, Швецине тата Норвегипе телефон тăрăх çыхăнса тăма пуçланă.

Тĕрĕслесе йышăннă хыççăн Мускав—Бухарест—София хулисем хушшинчи телефон линийĕ ĕçлеме тытăннă, унăн тăршшĕ 2.400 километр. Чи сывăх вăхăтрах çак лини Мускава Стамбул хулипе çыхăнтармалла. Мускавпа Хельсинки, Стокгольмпа Осло хулисем хушшинчи телефон çыхăнăвĕн иккĕмĕш линийĕ ĕçлеме тытăннă. Чи сывăх вăхăтрах çак лини Мускава Копенгаген хулипе çыхăнтармалла. Мускавпа Париж хушшинче яланах ĕçлекен радиопа телефон çыхăнăвĕ пуçланса кайнă.

Часах Мускавпа Прага тата Мускавпа Будапешт хушшинче те çĕнĕ телефон линийĕсем ĕçлеме пуçламалла.

Çĕнĕ линисен тăршшĕ питех те вăрăм пулин те, малтанхи кунсем çыхăну лайăх ĕçленине кăтартнă. (ТАСС).

Нимĕçсен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнбергра суд туни

ДЕКАБРĔН 14-мĕшĕнчи КАÇХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). 14-мĕшĕнчи каçхи ларура трибунал председателĕ лорд Лоуренс çапла пĕлтернĕ: Кальтенбруннера хÿтĕлекенĕ свидетель Пфаханбергер каласа панине суд протоколĕнчен илсе пăрахма ыйтнă, трибунал вăл ыйтнине сирсе ячĕ, тенĕ.

Унтан председатель Уолш майора сăмах парать. Уолш гитлеровецсем Европăри еврейсене хĕсĕрлени çинчен пĕлĕстерсе калать. Вăл çапла калать: фашистла ирсĕрсем, еврей халăхĕ тĕлĕшпе террор тăвас тата вĕсене тискеррĕн хĕсĕрлес политикăна пурнăçа кĕртсе пырса, Европăри цивилизацие калама çук пысăк сиен кÿнĕ, çав сиене саплама та май çук.

Унтан Америка айăплаканĕсен представителĕ Гаррис сăмах калать. Вăл Германи фашисчĕсем оккупациленĕ çĕршывсене çаратни çинчен тата унти халăха ирĕксĕр германизацилени çинчен калать. Германи фашисчĕсен политики—пурăнма кирлĕ текен çĕре тытса илмешкĕн агрессиллĕ вăрçăсем пуçласа ярасси пулнă. Çав политика, халăха нимĕçлентерме май пулмасан, ăна пĕтерсе лартма тăрăшнă, халăхăн ытти пайне германизацилеме тăрăшнă. Çавна пурнăçа кĕртмешкĕн нимĕçсем хăйсем тытса илнĕ çĕршывсенче пурлăха конфискациленĕ, ĕç вăйне Германие илсе кайнă, тытса илнĕ çĕршывсенчи чи пуян районсене нимĕçсене куçарнă. Польша çав политикăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе опыт тумалли пĕрремĕш çĕршыв пулса тăнă. Малтан Германи Польшăна хăйĕн вассалĕ туса хума тăрăшнă. Унтан вăл ăна тытса илнĕ, Польшăн 6 облаçне Германипе пĕрлештернĕ. Поляк рабочийĕсене Германие йышлăн илсе кайма пуçланă. Çак ĕçе нимĕçсем, пĕр енчен, ĕç вăйĕ çителĕклĕ тупас тесе, тепĕр енчен — пусмăрлăха кĕрсе ÿкнĕ çĕршыври халăх сахалтарах ÿссе пытăр тесе тунă.

Айăплакан малалла Варэн капитанăн докладĕнчен хăшпĕр вырăнсене вуласа парать, çав доклада Томас генерал валли çырнă пулнă. Вăл документа Америка çарĕсем Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн архивĕнче тупнă. Вăл документран Германи влаçĕсен Польшăна пĕтĕмпех çаратса пĕтерес политики питĕ лайăх курăнса тăрать. Докладра çапла каланă: центральнăй отделăн начальникĕ тата хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшал департаменчĕпе администраци начальникĕ хушшинче çыхăну тытса тăракан офицер 1939 çулхи октябрĕн 3-мĕшĕнче Познань хулинче Франк министрпа пĕрремĕш хут каласнă чухне Франк ăна çапла ăнлантарса панă: «Эпĕ Польшăна экономикăпа политика тĕлĕшĕнчен мана фюрер кăтартса панă йĕрке тăрăх тытса тăма шутлатăп. Фюрер кăтартса панă тăрăх, Польшăна çак йĕркепе тытса тăмалла: ăна пĕр шеллемесĕр эксплоатацилемелле, унтан тĕрлĕ материалсем, çав шутра чĕртаварсем, машинăсем, фабрика оборудованийĕ тата ытти те илсе тухмалла, çав материалсем Германин çар экономикине кирлĕ пулма пултараççĕ. Рабочисене те Германие илсе каймалла, Польшăн производство вăйне питĕ нумай чакармалла, ăна халăха тăрантарса пурăнма кирлĕ чухлĕ çеç хăвармалла. Поляксен çĕпĕ интеллигенцине ÿсме парас мар тесе, воспитани учрежденийĕсене, уйрăмах та техникăллă шкулсемпе колледжсене, пурне те хупмалла. Польшăна колоние тыткаланă пек тыткаламалла. Поляксем пĕтĕм тĕнчери аслă Германин чуриссем пулса тăмалла».

Айăплакан малалла 1940 çулхи январь уйăхĕнче Франк хушнипе çырнă питĕ секретлă документа вуласа парать. Çав документран поляксене харпăрлăхсăр хăвармалли тата Польшăра нимĕçсен колониллĕ ялĕсене туса хумалли политика курăнса тăрать.

Америкăн 3-мĕш армийĕн контрразведки Гиммлер архивĕнче Гиммлерăн СС офицерĕсем умĕнче каланă сăмахне шыраса тупнă, çав сăмаха Гиммлер «Адольф Гитлер» ятлă подразделение Гитлер ялавне панă май каланă. Гиммлер çапла каланă: «СС членĕсем час-часах халăха çĕршывран илсе тухасси çинчен шухăшлассĕ. Çав шухăшсем паян манăн пуçа та килсе кĕчĕç. Эпĕ сире халь калассине сирĕн çиĕнчех манас пулать, анчах та сирĕн çакна пĕлсе тăмалла: пирĕн ертсе пыракан темиçе поляка персе вĕлермелле пулать».

Айăплакан малалла фашистсем Богемипе Моравие германизацилени çинчен калать. Вăл «протекторатри» Германи çарĕсен командующийĕн заместителĕ Фредерик генерал янă меморандумран хăшпĕр вырăнсене вуласа парать. Çав документра çапла каланă: германизацилес ĕçе çак майсемпе тума пулать: пĕрремĕшĕнчен, Моравипе Богемие нимĕçсене куçарса, иккĕмĕшĕнчен—Богемирен мĕнпур чехсене илсе тухса, виççĕмĕшĕнчен—чехсене нимĕçсемпе пĕрлештерсе ярса. Чехсем нимĕçсемпе пĕрлешме килĕшмесен, вĕсене майĕпен пĕтерсе пымалла. Чех интеллигенцине пĕтĕмпех пĕтерсе лартмалла, мĕншĕн тесен вăл нимĕçсемпе хутшăнса каясшăн мар.

Айăплакан малалла хĕвеланăçĕнчи çĕршывсене çаратни тата германизацилени çинчен калать. Вăл 1942 çулхи августăн 7-мĕшĕнче пулнă ларура мĕн каланине çырса хунă хута вуласа парать. Çав канашлура Гиммлер сăмах тухса каланă. Вăл Эльзасра авалтанпа пурăнакан çынсене Эльзасран йышлăн илсе тухмалли анлă план çинчен каласа панă. Эльзас çыннисене малтанхи черетпе 1940 çулхи июльпе декабрь уйăхĕсем хушшинче илсе тухнă. Çав вăхăтра 105 пин çынна Эльзасран кăларса янă. Çав çынсем пуринчен ытла еврейсем, цыгансем, французсем тата французсем майлă тăракан çынсем пулнă.

Çакăнпа трибуналăн каçхи ларăвĕ хупăннă.

Финляндири вăрçă преступникĕсене суд туни

ХЕЛЬСИНКИ, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 15-мĕшĕнче Финляндири вăрçă преступникĕсен судĕнче Рамсала хÿтĕлекен адвокат Лагус сăмах тухса каланă. Лагус хыççăн айăпланакан Таннер хăйне хÿтĕлесе сăмах каламалла пулнă. Анчах та Таннер каласси пулман, мĕншĕн тесен суд хăй ĕçлес вăхăта пĕр сехетлĕхе кĕскетнĕ, çитес лару декабрĕн 17-мĕшĕнче пулмалла. Журналистсен ушкăнĕнче çапла шутлассĕ: Таннер тухса калассине суд Рютин хÿтĕлекен Прокопе адвокат ыйтнипе тăснă пулĕ тессĕ, мĕншĕн тесен Таннера хÿтĕлекен адвокат Эрих сывмар пирки суда çÿреме çаплах пултараймасть.

МАКАРТУР ГЕНЕРАЛ ЯПОНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ПАНĂ ПРИКАЗ

ЛОНДОН, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Макартур генерал Япони правительствине приказ панă. Приказра Япони правительствине Япони государствин тĕнĕ пулса тăракан синтоизма пулăшса тăма пăрахма хушнă. Çапла шутлассĕ: синтоизм ку вăхăтри Япони империйĕн никĕсĕ пулнă. Япони империалисчĕсем, синтоизмпа усă курса, национализмпа милитаризма пулăшса тăнă, çавăн пекех тата Япони императорĕ турăпа пĕртан тесе ĕнентерме тăрăшнă.

ПАРИЖ, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Токио хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Макартур генерал Япони правительствине приказ панă. Çав приказ тăрăх, Япони правительствин Ватиканпа çыхăну тытма пăрахмалла.

КИДО МАРКИЗА ТЫТСА ХУПНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Токиори корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Япони императорĕн Хирохитон чи çывăх советникĕ пулнă Коипи Кидона декабрĕн 16-мĕшĕнче, Макартур штабĕн приказĕ тăрăх, Сугамо тĕрмине хупнă.

КОНОЭ ХАЙНЕ ХАЙ ВИЛНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Япони правительстви Макартур генералăн штабне çапла пĕлтернĕ: Япони премьер-министрĕ пулнă Коноэ принц наркăмăш ĕçсе вилнĕ... Макартур генерал Коноэ принцпа вăрçă преступникĕсен списокне кĕртнĕ пулнă. Ăна Токио хули хĕррипчи Сугамо тĕрмине пыма приказ панă пулнă.

ЮГОСЛАВИРЕ ÇĔНĔ КОНСТИТУЦИ ПРОЕКТНЕ СÿТСЕ-ЯВАÇÇĔ

БЕЛГРАД, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 11-мĕшĕнче учредительнăй пухăвăн икĕ палатинче конституци комиссийĕсен ларăвĕсем пулса иртнĕ. Çав ларусенче çĕнĕ конституци проектне сÿтсе-явнă.

Çĕнĕ конституци проектне çавăн пекех тата предприятисенче, учрежденисенче, ялти пухусенче, халăх фрончĕн организацийĕсенче, антифашистла çамрăксен союзĕн пĕрлешĕвĕсенче, профсоюз организацийĕсенче тата хаçатсен страницисем çинче сÿтсе-яваççĕ. Конституци проекчĕ тăрăх йышăннă пур шухăшсемпе сĕнÿсене те учредительнăй пухăвăн конституци комиссийĕсене параççĕ.

АВСТРИ ПАРЛАМЕНТНЕ ПУХАС УМĔН

ВЕНА, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Вена хулинчи радио пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 16-мĕшĕнче каçхине Австрин вăхăтлăх правительстви решени йышăннă. Çав решени тăрăх, халĕ çĕнĕрен суйланă Австри парламентне декабрĕн 19-мĕшĕнче пухмалла.

Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсене пĕлсе тăма

1945 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Пионерсен çуртĕнче (К. Маркс урамĕ, 11) ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн 33-мĕш сессийĕ пулса иртет.

Сессире «СССР Верховнăй Совечĕн суйлавĕпе хула Совечĕн задачисем» çинчен сÿтсе-явмалла.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсем сессие хăйсен удостоверенийĕпе кĕреççĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин—0-23.

НТ 00476 ... при СНК ЧАССР. Тираж 16.000 экз.